

# Çывăх юлташа аса илнĕ май

Акнă тыр-пула чипер шăтма ăшăпа нӳрĕк, илĕхсе аталанма вĕсемсĕр пуçне тата çутăпа тăрă сывлăш кирлĕ. Турă панă талант та пушă вырăнта хунаса хăпараймасть. Литература çулĕ çине тăрас текенĕн те ачаллах, çамрăклах литература сывлăшĕпе сывласа пурăнмалла çав.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче Комсомольски районĕн «Октябрь ялавĕ» хаçат редакцийĕ çыравçăсем çитĕнтерекен хăйне евĕрлĕ питомник пекехчĕ. Ун чухнехи хаçат çумĕнчи литература пĕрлешĕвне çӳренĕ, редакцире ĕçленĕ çынсенчен çиччĕшĕ СССР писательсен союзĕн членĕсем пулса тăчĕç.

Хаçатра «Кĕтне» ятарлă страница кашни эрнере пекех тухса тăнă. Литпĕрлешӳ ларăвĕсем те вăхăтра иртнĕ. Вĕсем пирĕншĕн пултарулăх урокĕсемех пулнă. Анчах 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче куккурус «ăсти» Н.Хрущев тепĕр реформа шутласа кăларчĕ те, Комсомольски районĕн çуррине Патăрьел районне, тепĕр çуррине Канаш районне куçарчĕç. «Октябрь ялавĕ» хаçат хупăнчĕ. Литература лару-тăрăвĕ те пăчланчĕ. Редакцире ĕçлекенсем саланса пĕтрĕç.

Ăнман реформа нумая пымарĕ. Пирĕн район çĕнĕрен чĕрĕлсе тăчĕ. Район хаçачĕн тата типографин пурлăхне Патăрьелне леçнĕччĕ. Калле кӳрсе килме тиврĕ. Район пĕтиччен хаçата редакцилесе тăнă Л.Таллеров Комсомольскинчех пурăнатчĕ. Ытти хаçатçăсем Канашпа Патăрьелне кăна мар, Шупашкарах куçа-куçа кайнăччĕ. Эпĕ вара хам çуралса ӳснĕ ялтах ачасене вĕрентеттĕмччĕ.

Нарăс уйăхĕнче пирĕн шкул умне парти райкомĕн машини пырса чарăнчĕ. Мана урок пĕтессе кĕтмесĕрех директор патне чĕнтерчĕç. Район пĕтиччен ВЛКСМ пĕрремĕш секретарĕ пулнă, çĕнĕрен чĕрĕлнĕ районта парти райкомĕн иккĕмĕш секретарьне суйланнă Л.Андреев хăйĕн юлташне курнишĕн савăннине пĕрре те пытармарĕ, мана çупăрласах илчĕ. Çавăнтах ĕçрен кăларма ыйтса хут çыртарчĕ те мана района лартса кайрĕ. Эпĕ çара кайиччен те редакцин яваплă секретарĕ пулнă та, халĕ те çав ĕçех шанчĕç.

Пуш уйăхĕнче «Октябрь ялавĕ» çĕнĕрен тухма тытăнчĕ. Хамăрăн типографие йĕркелесе яриччененех ăна пичетлеме Канаша хутлама тиврĕ.

Саланса пĕтнĕ хаçатçăсем таврăнчĕç. Çырусен пайне ертсе пыма кăна çын пулмарĕ. Вара унччен хаçат çумĕнчи литпĕрлешӳ ĕçне хастар хутшăннă çынсене аса илме тытăнтăмăр. В.Шемекеев хушамачĕ чи малтан сиксе тухрĕ.

Çунат сарнă кайăкăн вĕçсе хăпармаллах. Чăваш литературин лаççи вăл – Шупашкар. Пĕрре хупăнса тепре уçăлнă хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсене рес-

публика ертӳҫисем хаклатчӗҫ. Вӗсене пӗрерӗн-пӗрерӗн Шупашкара, ытти районa куҫара-куҫара кайма тытӑнчӗҫ. Пысӑкрах та сумлӑрах вырӑна. Л.Таллерова «Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн культура пайне ертсе пыма шанчӗҫ.

Л.Таллеровӑн пӗрремӗш кӗнеки, очерксен пуххи, районта ӗҫленӗ чухнех пичетленсе тухнӑччӗ. Анчах Шупашкара куҫнӑ-куҫманах литература ӗҫне пуҫӗпех кӳлӗнме май пулмарӗ унӑн, пӗр повеҫпе калавсенчен тӑракан «Хурӑн шывӗ» пичетрен тухиччен самаях вӑхӑт иртрӗ. «Писательсен хаҫат ӗҫӗнче нумай тытӑнса тӑма юрамасть, эпӗ, ав, хама шеллемерӗм, хаҫат ӗҫне ытларах та патӑм», – тесе Лаврентий Васильевич темиҫе те каланӑ. «Ҫӑлтӑр витӗр ҫул курӑнать» роман пек калӑплӑ произведени ҫырнӑ чухне писателӗн ик алла пӗр ӗҫ кӑна пулмалла. Ҫавӑнпа вӑл «Тӑван Атӑл» редакцине куҫрӗ. Пӗр хушӑ журнал редакторӗ пулнӑ хыҫҫӑн профессионал ӗҫне куҫма та май тупрӗ-тупрех. Халӗ ӗнтӗ ҫулӗсем те сахал мар пулин те паян та тухӑҫлӑ ӗҫлекен прозаиксен шутӗнчех.

Хаҫат редакторӗ улшӑниччен маларах ял хуҫалӑх пайне ертсе пынӑ Г.Мальцева Йӗпреҫ районӗн «Ҫӗнтерӳшӗн» хаҫачӗн редакторӗ пулма куҫарса кайнӑччӗ. Вӑл ӳнта нумай тытӑнса тӑмарӗ, Шупашкар ҫывӑхӗнчи Кӳкеҫре «Ленинец» хаҫат редакцийӗнче ӗҫлеме тытӑнчӗ. «Кӗтне» литпӗрлешӗвӗн хастарӗ пулнӑ Г.Чаржова тӳрех унта ӗҫ тупса пачӗ. Ку вӗсемшӗн иккӗшӗншӗн те хӑйне евӗрлӗ трамплин пулчӗ. Геннадий Степановича малтан «Капкӑн» редакцине илсе кайрӗҫ. Унтан вӑл писательсен союзӗ ҫумӗнчи илемлӗ литература пропагандин бюровне куҫрӗ. Шилӗк ҫине тухсан эстрада артисчӗсенчен нимпе те кая марччӗ вӑл, хӑй хайланӑ кулӑш произведенийӗсене пӑхмасӑр калама питӗ ӑсталанса ҫитнӗччӗ. Г.Чаржов Чӑваш кӗнеке издательствине ӗҫлеме куҫрӗ. 1974 ҫултанпа мӗн пенсие тухиччен илемлӗ литература редакторӗ пулчӗ. Вӑл Мускаври М.Горький ячӗпе тӑракан Литература институтӗнче Ленин премийӗн лауреачӗн Е.Исаевӑн семинарӗнче те вӗреннӗ. Вырӑссен паллӑ поэчӗ Г.Чаржова иккӗмӗш Ухсай тесех хакланӑ. Унӑн пултарулӑхне тивӗҫлипе хак паман-ха эпир. Ҫитменнине вӑл хӑйне хӑй рекламӑлама пӗлмест.

Ф.Агивер Шупашкара куҫсан пӗр хушӑ Чӑвашрадиора ӗҫлерӗ. М.Горький ячӗллӗ Литература институтӗнчи литература курсне пӗтерсе таврӑнсан писательсен союзӗн правлени председателӗн ҫумӗ пулчӗ. Унтан, пирӗн ҫӗршывра та «демократи самани» пуҫланса кайсан, журналсен редакторӗсене те писательсен пухӑвӗсенче суйлама тытӑнтӑмӑр. Ф.Агивер «Тӑван Атӑл» журнал редакторне суйланчӗ. Кӑшт вӑхӑтран ӑнах писательсен союзӗн правлени председателӗ пулма шанчӗҫ.

В.Шемекеевӑн та вӗҫсе кайма черет ҫитрӗ. Мана тӑвата ҫул Муркаш районӗн «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫачӗн редакторӗ пулса ӗҫленӗ хыҫҫӑн Шупашкара Чӑваш кӗнеке издательствин директорне куҫарчӗҫ. «Хӑвӑн вырӑнна кама сӗнетӗн?» – тесе ыйтрӗҫ. «Ҫавна», – терӗм иккӗленмесӗр-тумасӑр.

Пирӗнпе пӗрле ӗҫленӗ ҫынсенчен тепри Г.Уткин Аслӑ Каҫалтах тытӑнса юлчӗ-ха. Район хаҫачӗн редакторӗ пулса чылаях ӗҫлемелле пулчӗ унӑн. Ӑнах тата парти райкомӗн пӗрремӗш секретарьне суйларӗҫ, район «хуҫи» туса хучӗҫ. Ҫапах та пирӗн йыш такӑрлатнӑ сукмакпах утма тиврӗ унӑн та

– Шупашкара куçса килсен «Хресчен сасси» хаçат редакторĕн çумĕ пулчĕ.

В.Шемекеевăн «Тăван çĕршыв» сăвви 1957 çултах «Тăван Атăл» журналта пичетленсе тухнăччĕ. Ăна ятлă-сумлă композиторах кĕвве хывнăччĕ. Те çакă хавхалантарса ячĕ сăвă авторне, те Турă панă таланчĕ çавă пулчĕ: В.Шемекеев юрă кĕвĕлекенсемпе çывăхланма тытăнчĕ. Комсомольскинче ĕçленĕ чухнех кунти Культура çурчĕн баянисчĕпе В.Митюковпа иккĕшĕ темиçе юрă та çырнăччĕ. Вĕсене халĕ те юрлаççĕ Аслă Каçал çыннисем. Муркаша ĕçлеме куçсан Виталий Дмитриевич кунти Культура çурчĕн илемлĕх ертÿçипе Юрий Жуковпа туслашсах кайрĕ. Шупашкара куçсан Ю.Кудаковпа пĕр кĕвĕ тупайрĕ.

В.Шемекеев сăввисемпе пирĕн композиторсем çырнă юрăсенчен чылайăшĕ халăх юррисемех пулса тăчĕç.

Писателĕн, уйрăмах поэтăн, çакăрĕ мĕн тери йывăрлăхпа тупăннине каламасăр чăтаймастăпах. Писатель çăкăрĕ «гонорар» ятлă. Патшалăх чиновникĕсем талантлă çын укçасăрах талантлă çырать тесе мăшкăлланине те тÿсме тивнĕ. «Писателĕн мĕншĕн директортан нумайрах укçа илмелле?» – тенине те илтнĕ. Прозаиксем темле тесен те саплаштаркаласа пурăнаяççĕ-ха, анчах поэтăн – пуç хыçмалла та хыçмалла. Сăвă кĕнекисен тиражĕ патшапа генсек вăхăчĕсенче те пĕчĕк пулнă. Тăкакĕсене проза кĕнекисен шучĕпе саплаштарма тивнĕ. Мускавра та, Шупашкарта та сăвă кĕнеки кăларма çав тери йывăрччĕ. Халĕ, пурне те пасар саккунĕпе кăна пурăнма хистенĕ чухне, патшалăх чун апатне те шоу-бизнес тунă хыççăн, пирĕн çĕршывра поэтсем çăкăрсăрах тăрса юлчĕç. Ирĕксĕрех советсен вăхăтне аса илетĕн. Ун чухне шăпах сăваçсене пулăшма писательсен союзĕсен çумĕнче илемлĕ литература пропагандин бюровĕсене йĕркеленĕччĕ. Пропаганда ушкăнĕсем йышлă пулман: пĕр юрăçпа пĕр музыкçă, икĕ сăваç. Урăхла каласан, «Волга» машинăна вырнаçакан ушкăн. Ялсене кайсан кунне икшер-виçшер хут халăх пуçтаратчĕç вĕсем. Эпĕ хам та çÿрекеленĕ пропаганда ушкăнĕпе пĕрле. Пур çĕрте те, уйрăмах республика тулашĕнче, пире çав тери тарават кĕтсе илетчĕç. В.Шемекеев 1986 çултан пуçласа пропаганда бюровĕ хупăниччен унта ĕçлерĕ.

Поэтсем те çăкăрлă пулчăр тесен çĕнĕрен чĕртсе тăратмалла çав пропаганда бюровĕсене. Ячĕ килĕшмест пулсан улăштарма та пулать.

В.Шемекеев та, ытти нумай сăваç пекех, хăй пурăннă чухне виç-тăватă кĕнеке кăна кăларса ĕлкĕрейрĕ. Пĕрремĕш сăвви республика журналĕнче кун çути курнă хыççăн пĕрремĕш кĕнеки тухиччен унăн чĕрĕк ĕмĕре яхăнах кĕтмелле пулчĕ.

Поэт хăй пирĕнтен уйрăлса кайсан мăшăрĕ Галина унăн сăввисене пухса «Юрату эрехне эп ĕçсе пĕтермен» ятпа алла тытмалăх кĕнеке кăларчĕ.

Кĕнеке ятĕнченех кунта ĕнтĕ юрату лирикине пуçтарнă теме пулать. Çапла, пур унта юрату лирики те. Анчах эпĕ Шемекеева публицист тенĕ пулăттăм. «Маленков стаканĕ» сăвва авторĕ пропаганда ушкăнĕпе çÿренĕ чухне час-часах калатчĕ те, çынсем шухăша кайса, пуç чиксе итлесе ларатчĕç:

Ĕмĕрĕ стаканăн вăрăм пулчĕ,
нумайччен янрарĕ чапĕпе.
Тăрăхларĕ пирĕнтен вăл, кулчĕ,

ун шăпи паян тинех, ак, тулчĕ –
Сăввăма вĕçлес кăмăлăм пурччĕ
Çакăн пек вĕри сăмахсемпе.

Кăмăл пур, анчах та вĕçлеетне?
Пит-куçне эрехпеле пĕветнĕ
черетсем паян та-çке пин-пин...
Стакана анчах халь пĕчĕклетнĕ.
Маленковăн мар вăл – урăххин.

В.Шемекеевăн гражданла лирики хĕрÿллĕ, йыхравлă, вĕри туйăмлă. Кĕнекене калăпланă чухне сăвăсене темăсем çине пайламан, çавăнпа публицистла сăвăсем паларсах тăмаççĕ пек. Чăвашлăх теми поэтсен пултарулăхĕнче пурин те тенĕ пекех пур. Шемекеевăн вăл курăмлăрах та пулĕ.

Эпĕ ентешĕмĕн пултарулăхне туллин тишкерсе хак парас тĕллев тытман. Аннотаци чĕлхипе каланипех çырлахасшăн.

Эпĕ вăл хăй пултарулăхĕнче çыннăн пурнăçри вырăнĕ пирки философла шухăшласа çырнине уйрăмах палăртнă пулăттăм. Вăл ырăпа усала пайăрланă. Туслăхпа юратăва мухтанă. Çын чунне чи пысăк пуянлăх тунă.

В.Шемекеев пенси çулнелле çитсе пынă чухне пирĕн çĕршывра «демократи самани» хуçаланатчĕ. Пултарулăх союзне чапшăн хыпса çунакан çынсем ертсе пыма тытăнчĕç. Вĕсен пĕртен-пĕр саккун кăначчĕ: чăваш литературине мансăр пуçне никам та кирлĕ мар. Çав çулсенче тивĕçлĕ канăва тухнисен пĕчĕк пенсипех çырлахма тиврĕ. Мана писательсен союзĕн правлени председателĕн штатра тăман çумĕ тунăччĕ. Пĕр ларура çак ыйтăва хускатрăм: «Унччен пулнă йĕркене тавăрар-ха», – терĕм. Персональнăй пенсие пăрахăçланă, «Ĕç ветеранĕ» ят илнисене вара çăмăллăхсем параççĕ. Халĕ ку ята камсене тата мĕншĕн панине пурте пĕлетпĕр. Хаçатсем ун çинчен çырсах тăраççĕ. Ун чухне апла марччĕ. Раççей писателĕсен союзĕн яваплă секретарĕпе М.Числовпа çыхăнтăм. Вăл вырăнти пенси фондне кайма сĕнчĕ. Ун чухне «Ĕç ветеранĕ» ята Раççей писателĕсен союзĕн Хисеп грамоти пулсан та панă. В.Шемекеевăн ветерансен ретне тăма пулăшакан нимĕнле награда та çукчĕ. Хăйĕн çыравçă стажĕ (ăна пĕрремĕш произведени пичетленнĕ кунран шутлаççĕ) 40 çултан та иртнĕччĕ. 6 çыравçа Раççей писателĕсен союзĕн Хисеп грамотине, В.Шемекеева Раççей Культура министерствипе Раççей профсоюзĕсен Тĕп Канашĕн Хисеп грамотине, Н.Теветкеле Раççей Культура министерствин Хисеп грамотине илме тăрататрăмăр. Ун чухне 7 писатель Раççей Федерацийĕн «Ĕç ветеранĕсем» пулса тăчĕç. В.Шемекеев вăл ята та илме ĕлкĕреймерĕ: Хисеп хучĕ ăна пытарнă кунсенче кăна килсе çитейрĕ.

Пĕр сывлăшпа сывласа ураланнă, пĕр сукмакпах утса литература çулĕ çине тухнă çынсен пултарулăх шăпи тĕрлĕрен пулчĕ. Пурнăçĕ ăнмасан ача-пăча яланах ашшĕ-амăшне айăплать. «Кĕтне» çуратнă çыравçăсен вăл йăла çук-ха. Çапах та Турă панă талантăн тăрлавсăр шăпи мĕнрен килнине пĕлесех килет.

**Денис Гордеев,**
**халăх писателĕ**